Чăваш халăх академийĕн вулавăшĕ



ВИТАЛИЙ СТАНЬЯЛ

# АНДРЕЙ ПЕТТОКИ СĂВĂÇĂ

ЧĂВАШ ХАЛĂХ АКАДЕМИЙĔ

«Чăваш сăмахлăхĕн ăстисем» ярăм

Виталий СТАНЬЯЛ

# АНДРЕЙ ПЕТТОКИ СĂВĂÇĂ

## Пурнăçĕпе пултарулăхĕн тĕрленчĕкĕ

Шупашкар – 2005

УДК 821.512.111 . 0
ББК 84 (2 Рос–Чув) 5
С 76

83.3 (2 Рос = Чув)
Республиканское государственное учреждение "Государственный архив печати Чувашской Республики"
Обязательный экземпляр
20 января 2005
№ 27

**Станьял В.П.**
**Андрей Петтоки сăвăçă:** пурнăçĕпе пултарулăхĕн тĕрленчĕкĕ. «Чăваш сăмахлăхĕн ăстисем» ярăмран. – Шупашкар, «Новое время», 2005. – 36 с.

Андрей Трофимович Петтоки (1905–1942) – талантлă поэт, журналист, йĕркелӳçĕ. Вăл Тăван Çĕрщыв Аслă вăрçинче паттăрсен вилĕмĕпе вилнĕ. Кĕнекене Аслă Çĕнтерӳ 60 çулне тата поэт çуралнăранпа 100 çул çитнине халалласа студентсемпе учительсем, таврапĕлӳçĕсем, тăван сăмахлăх пуянлăхĕпе интересленекенсем валли кăларнă. Вăл Чăваш халăх академийĕ йĕркелесе пыракан «Чăваш сăмахлăхĕн ăстисем» ярăмпа тухать.

Андрей Трофимович Петтоки (7.10.1905, д. Ахманеи Моргаушского района Чувашской Республики – 18.04.1942, погиб в бою под Витебском, похоронен в с. Селищи Велижского района Смоленской обл.) – организатор производства (председатель колхоза и райколхозсоюза), талантливый журналист, поэт, переводчик. Работал в Чебоксарах ответственным секретарем литературно-художественного журнала, председателем Союза писателей. Учился в Москве в институте кинематографии. После окончания Самарского пединститута (1940) работал научным сотрудником областного краеведческого музея. Семья живет в Самаре.

Очерк народного академика В.П.Станьяла о жизни и творчестве А.Т.Петтоки адресован широкому кругу читателей.

На первой странице обложки воспроизведен портрет поэта А.Т.Петтоки (фото 1937 г.), на 4 странице обложки – факсимиле рукописи стихотворения «На врага!» (1941).

© Союз чувашских краеведов.
© Чувашская народная академия.

## Халал сӑмахӗ

1941–1945 ҫулсенче Тӑван ҫӗршыв ирӗклӗхӗпе пӑхӑнманлӑхӗшӗн хаяр ҫапӑҫусенче пуҫ хунӑ чӑваш ҫыравҫисем йышлӑ. Янӑравлӑ саслӑ теҫеткешер калавҫӑпа сӑвӑҫ вӑрҫӑ хирӗнче ӗмӗрлӗхех шӑпланнӑ. Кӗнеке кӑларса литература историне ҫырӑнса юлнисем ҫирӗммӗн ытла: Максим Чалдун, Хветӗр Николаев, Иван Викторов, Илле Думилин, Хветут Ҫитта, Кӗҫтук Кольцов, Владимир Бараев, Максим Ястран, Ефрем Еллиев, Марк Аттай, Василий Васькин, Арсен Орлов, Александр Пермяк, Кӑтра Мишша, Василий Усли, Николай Чурбай, Вениамин Туртуш, Николай Пиктемир, Семен Элем... Ҫӗршыва хӳтӗлекенсен кунӗнче тата Ҫӗнтерӳ уявӗнче вӗсен ячӗсене шкул ачисем строй умӗнче хисеп туса асӑнаҫҫӗ. Вилӗмсӗр паттӑрсен шутӗнче – Андрей Петтоки ҫыравҫӑ ячӗ. Тӑван халӑх чыслӑ ывӑлӗсемпе хӗрӗсене манмасть. Нихҫан та манмӗ.

Ҫак пӗчӗк кӗнеке Андрей Петтоки палӑкӗ умне хунӑ чӗрӗ чечек кӑшӑлӗ вырӑнне пултӑр.

## Хушма хушамат вӑрттӑнлӑхӗ

Пурнӑҫра Автан Онтрийӗ (вирьялсем «о» сасӑпа калаҫҫӗ) Петухов хушаматпа ҫӳренӗ. Председательсем пулнӑ чухне, паллах, ӑна «Андрей Трофимович» тесе хисепленӗ. Литература историне «Петтоки» хушаматпа кӗрсе юлнӑ. Ӑна 1923 ҫулта Хусанта партипе совет шкулӗнче вӗреннӗ чухне тупнӑ. Малтанхи пайӗ – хӑйӗн, иккӗмӗш пайӗ – ҫармӑссен палӑлӑ ҫыравҫин Александр Токӑн (1907–1970). Малтанласа иккӗшӗ, хӑйсен нихҫан арканми туслӑхне палӑртса, пӗр пекех алӑ пуснӑ. Пурри – йӑлтах пӗрле, ҫукки – ҫурмалла, тенӗ.

Анчах мӗнле-ха апла? Ҫармӑсла та А.Петтоки, вырӑсла та, чӑвашла та! Малтанлӑха Петтоки-1 е Петтоки-2 лартас шут та пулнӑ. Ку шыравсем Андрей Трофимовичшӑн пӗрре те ют япала мар. Ҫамрӑк чухне шӳтпе пӗлеслӗх пӗрле ҫӳренӗ.

20-мӗш ҫулсен варринче Андрей Петухов Хусана пынӑ вӑхӑтра ҫамрӑк мари поэчӗ Александр Иванович

Ток Хусан рабфакĕнче вĕреннĕ. Вĕсем юлташсем пулса тăнă. Иккĕшĕ пĕр псевдонимпа очерксемпе фельетонсем пичетлеме тытăннă.

Петтоки – хушамачĕсене кĕскетсе тунă сăмах. Петуховран «Пет» хăварнă, Токаревран «Ток» юлнă. Пет+токи, чăвашла ку «Петтоксем», çармăсла «Петтоквлак» пулмаллаччĕ ĕнтĕ. Анчах ун пек туман Сĕнтĕр–Ахманя каччипе Морки–Кушня ачи... Çапла вара, кӳршĕллĕ икĕ халăхăн пĕр псевдонимпа пичетленекен икĕ поэт çуралнă.

Александр Иванович Ток 1933 çулччен «Петтоки» ятпах пичетленнĕ. 1927 çулта Хусанта «Вунă çул» кĕнеке кăларнă (ас тăвăр: А.Петтокин те кĕнеки «Вунă çул» ятлă). Çитĕнерехпе Мускавра СССР халăхсен тĕп издательствинче ĕçленĕ, кайран ытти вырăнсенче пулнă, вăл шутра – «Молодая гвардия» издательствăра. Тăван Çĕршыв аслă вăрçине хутшăннă. Унтан таврăнсан Мари АССР-ĕн Министрсен Канашĕнче вăй хунă. Юлашки çулсенче нумай куçарнă. 1970 çулта вăл А.Горький, А.Луначарский, Дм.Фурманов, А.Гайдар, А.Петтоки тата ытти паллă çынсем çинчен асилӳсен кĕнеки кăларнă. Унта çапла çырнă вырăн пур: «Эпир А.Петтокипе Хусанта советпа парти шкулĕн курсанчĕсем чухне паллашрăмăр. Ун чухне хăшпĕр заметкăсене пĕрле çыраттăмăрччĕ. Тĕрĕссипе эпĕ çырнă, вăл юсатчĕ. Пĕррехинче вăл мана çĕнĕ псевдоним йышăнма сĕнчĕ.

«Ку чăваш сăмахĕ. Малалла эпир е «2-Петтоки-2», е «Пет-2-токи, е «А-Петтоки-А» псевдонимпа пичетлĕпĕр, – терĕ. – Ку вăл эпир иккĕн пĕрле çырнине пĕлтерет», – аса илнĕ Александр Ток *(Незабываемые годы молодости, 1970, 7 ен).*

Чăн та, халĕ ĕнтĕ «Петтоки» чăваш сăмахĕ пулса тăчĕ. Шкул кĕнекисене, энциклопедисене кĕчĕ, историе çырăнчĕ.

«Чăваш писателĕсем» библиографи кăтартмăшĕнче (1964, 1968, 1972), вулавăшри çӳлĕксем çинче Андрей Петтоки ячĕ çирĕп тăрать.

Ачасем унăн хайлавĕсене юратса вулаççĕ, «паттăр салтак» тесе калаççĕ.

Хушаматне пĕр «к» саспаллипе çыратпăр – Петтоки, анчах каласси вăрăм сасăллă пулать, çавăнпа «Петтоги» те, «Петтокки» те мар. Çапла кĕрсе юлнă, çапла çирĕпленнĕ.

## Тăван çĕршыв ытамĕ

Андрей Петтоки Муркаш районĕнчи Мăн Сĕнтĕр енче – Мускав çулĕ хĕрринчи Ахман Яра 1905 çулхи юпан 7-мĕшĕнче çуралнă. Ачаллах ашшĕсĕр тăрса юлнă. Ялта тата Каршлăхри шкулсенчен вĕренсе тухнă, вара ака-суха ĕçĕпе пурăннă. Çĕр ĕçĕпе кăна кŷнĕçсе тăрайман. Мăн Сĕнтĕрти вулавăша çŷренĕ. Унтах никамран малтан комсомол ячейкине йĕркеленĕ те хăйех ертсе пыма пуçланă. 1922 çулта, выçлăх вăхăтĕнче, ăна Хусана вĕренме янă. Икĕ çул вĕреннĕ унта, татах икĕ çул Тутарстанри Чистай уесĕнчи комсомол комитечĕн пайташĕ (членĕ) пулнă, хăй вара Йĕкер вулăсĕнчи организацие ертсе пынă.

Кунта та, унта та сăвăсем çырнă. Мăн Сĕнтĕре, алăпа кăларакан журнала ярса панă...

Çеçпĕл Мишши, Исаев Мĕтри, Виктор Рсай тата ытти тантăшĕсем ку вăхăтра вăр-вар çаврăннине аса илес пулсан, ашшĕсемпе ывăлĕсем, пиччĕшĕсемпе шăллĕсем урлă-пирлĕ тавлашнине шута хурсан çав çулсем пит хĕрŷ пулнине ăнланма йывăр мар. Лайăххи те, начарри те пур пулĕ çав çĕнелŷре. Ăна эпир мар, вĕсем хăйсем кăна калама пултарнă. Ăс-хакăлшăн, таса пурнăçшăн, ирĕкшĕн, танлăхшăн пуçланнă кĕрешŷре маттур пулнине тиркеме май килмĕ. Ку вăл Чĕрĕлŷ, ку вăл – Çĕкленŷ! Ăна халăх асĕнчен кăларса пăрахаймăн...

Яш-кĕрĕм ушкăнĕнчен парти ретне кĕнĕ Онтри Петухов 1927–1929 çулсенче Хĕрлĕ Çар ретĕнче тăрать. Рота политрукĕ. Сăвă та, поэма та çырать. Çартан тата ытларах хастарланса таврăнать. Тĕнче çине анлăн пăхма пĕлекен пулса килет: «Умра çĕн ĕмĕр, тĕнче, хĕрŷ кăварлă çамрăклăх!» («Çиçĕм» сăвă).

Мăн Сĕнтĕр хутлăхĕнче пуринчен малтан колхоз йĕркелет, ăна «Ленинçул» ят парать. Калаççĕ: капла тĕрĕс мар, «Ленин çулĕ» темелле, теççĕ. Вăл хăйĕннех тăвать: «Ленинпуть», урăх нимле те мар!

Хуçалăха хăй ертсе пырать. Колхоз фермине йĕркелет. Ăна та хăй ертсе пырать. Районта колхозсоюз тăвать. Ăна та хăй ертсе пырать...

Кĕçех ялта те йăлăхтарать, те урăх сăлтав тупăнать. Тен, сăввисемпе поэми пичетленни çĕклентерет – 1932 çулта Андрей Трофимович Петтоки Шупашкара куçать. Кĕçех «Çирĕм иккĕ» ятпа сăвă кĕнеки кăларать. «Сунтал» журнал тĕременĕ (редакторĕ) пулса тăрать. Чăваш писателĕсен союзне ертсе пыма суйлаççĕ. Пĕр вырăнта чунĕ чăтман темелле-ши? Мускаври кинематографи институтне сценари уйрăмне вĕренме каять. Тĕрĕс тăвать, мĕншĕн тесен Шупашкарта ун çине кăрлаппансем сиксе ларнă, тĕрлĕ элекпе чыхса, «критика» статйисем пичетленĕ. Кино ĕçне Петтоки ачаран юратнă. 1930 çулта «Чăвашкино» студийĕ сценарисен ăмăртăвне ирттерсен, Пăкача вăхăчĕ çинчен çырса парне çĕнсе илет. Мускава вĕренме кĕрсенех «Хĕрлĕ Сурăм» колхозри маттур доярка Ксения Григорьева çинчен «Орден» сценари çырса парăрать. Сценарис лартма йышăнаççĕ! Тухаймасть фильм. Студи хупăнать. Вара Онтри 1937 çулта Самарти педагогика институтне куçса каять, унтах пурăнма тытăнать. Вăрçа каиччен хулари краеведени музейĕнче ĕçлет. Эпĕ Андрей Петтоки мăшăрĕпе Галина Андреевнăпа тата унăн хĕрĕпе Людмила Андреевнăпа Самарта темиçе те курса калаçрăм. Пĕрремĕш хут паттăр поэт-салтак вилни 40 çул çитсен – 1982 çулта калаçнăччĕ. Самар хулин аслă тӳремĕнче (площадĕнче) Чăваш университечĕн 55 студенчĕпе 4 вĕрентӳçи умĕнче поэт мăшăрĕпе хĕрĕ тирпейлĕ упранса пурăннă сунтăх-арчана илсе тухса уçса кăтартрĕç. Унта Андрей Петтоки çырăвĕсем, ун патне паллă писательсем (Илле Тукташ, Иоким Максимов-Кошкинский) янă хутсем, пичетленмесĕр юлнă сăвăсем, «Голубая мечта» ярăм, «Нарспин» вырăсла кăларăмĕ тата ытти паха хутсем пурччĕ. Алçырусем, пичетленмен хайлавсем, 1936 çулта тухнă «Вунă çул» тата 1964 çулта кăларнă «Сăвăсемпе поэмăсем». Арăмĕпе хĕрĕ чун пек юратса упранă вĕсене, вуланă, тишкернĕ, хăйĕнпе чĕрĕ халлĕн калаçнă пек туйнă...

Ентешĕсем те Петтокие манмарĕç. Малтан Герольд Лукоянов чĕлхеçĕ маттур ентешĕн еткерне тимлесе пухрĕ. Самарта пурăннă чухне Риф Ишутов тĕпчевçĕ поэт пулта-

рулăхне тивĕçлипе хисеплерĕ. Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен тĕпчев институтĕнче ĕçлекен (ку институтра А.Т.Петтоки те ĕçленĕ) Г.А.Дегтярев ентешĕн алçырăвĕсене пухрĕ, Самар хулипе çыхăну тытсах тăчĕ. Кĕнеке кăларма институт хут, Мускавкасси ял канашĕ укçа-тенкĕ уйăрса хунăччĕ. Чăваш кĕнеке издательствин планне кĕме тӳр килмерĕ, кайран тĕнчи çаврăнса кайрĕ... Вăхăт кĕтсе тăмасть. Поэтăн 100 çулĕ çитрĕ. Манăçмарĕ вăл, сасси çухалмарĕ.

Андрей Петтоки – XX ĕмĕрĕн 30-мĕш çулĕсенчи янăрав саслă паттăр ывăлĕ. Тĕлкĕшсе те вĕлкĕшсе çĕкленнĕ вăл ăс-хакăл тӳпине. Вырăна тухса калав-тĕрленчĕк çырнă, куçарнă (А.Серафимовичăн «Хурçă юхăм» романĕ мĕне тăрать!), кино ӳкерме ĕмĕтленнĕ. Темĕн те тăвас килнĕ унăн, чăваш ӳнерĕсен пĕтĕм асамачĕ часрах ялтăртатса кайтăр тесе тапăртатнă.

Нимĕç фашисчĕсем Тăван çĕрĕмĕре сĕмсĕррĕн çĕмĕрсе кĕрсенех Андрей Трофимович Петтоки политрук фронта тухса кайнă. Фронтран янă çырăвĕсем сăвăç чунне, ăсне, шухăш-кăмăлне ăнланма май параççĕ. Хăш-пĕр вырăнсене вуланă чухне чĕре пăчăртанса ыратать – мĕн тери пысăк ĕмĕтсем хараммăн татăлнă, мĕн чухлĕ паттăрлăх манăçа юлчĕ! Юлашки çапăçăва кĕрес умĕн ака уйăхĕн 17-мĕшĕнче вăрманти йывăç тункати çине ларса çырнă çырăвĕ упранать. «Паçăрах артиллери канонади пуçланчĕ – ку ĕнтĕ наступление кĕрес умĕнхи хатĕрленӳ пырать... Çапăçура темĕн те сиксе тухма пултарĕ, чĕрĕ юласса шанатăп. Пулма пултарĕ – вĕлерĕç те. Çапăçăва çакна ăнланса, тăшмана çапса аркатмаллине пĕлсе кĕретпĕр... Эпĕ киле таврăнатăпах!»

Леонид Агаковпа, Стихван Шавлипе, Петĕр Хусанкайпа тата ытти чăваш халăх писателĕсемпе пĕрле тăрас çынччĕ Петтоки! «Раскаты грозных бурь зовут нас в бой. Пред нами – дни борьбы, побед и славы. Не зная страха, с песней огневой пойдем мы на врага стальною лавой!» Вутлă хурçă çулăмĕнчен Андрей Петтоки поэт тухайман.

Тăван ялĕнче, тăван кил умĕнче ăна асăнса лартнă палăк патĕнче йăмрасем хурланса лараççĕ. Петтокисен

тёп килĕ выранӗнче халӗ Петр Васильевич Козлов килйышӗ пуранать. Петр Васильевич колхоза та, ял канашне те ертсе пынӑ. Хисеплĕ çын, хӑй картинче хитре вырӑна ятарлӑн уйӑрса, вӑл Андрей Петтоки кӗтесне уçнӑ, Виталий Васильев бригадирпа пĕрле палӑк лартнӑ. Пĕр вӑхӑтра ял çыннисем Мускавкасси шкулне поэт ятне парас тесе ыйту хускатнӑччӗ. Анчах та ун чухне ят ирӗкне инçетрен ыйтса илмеллеччӗ, хутсем унта-кунта çитнӗ çӗре районӗ те калле-малле улшӑнса пӗтрӗ...

Хитре, вӑр-вар, хӑюллӑ, кӑмӑллӑ, çепӗç чунлӑ Андрей Петтокине ял çыннисем юратма пӑрахман-ха. Сарӑ лĕпĕше те, симĕс турата та амантма юраманни çинчен сӑвӑ калакан Петтокие итленӗ шкул ачисем паян – тӑхлачӑсемпе хӑтасем – ӑна тӗлӗкри пек аса илсе савӑнаççӗ.

Вӑтӑрмӗш пӑтравлӑ çулсенче, паллах, Андрей Петтоки пек маттур ертӳçӗсене хура пӗлӗт пуринчен малтан витсе кайнӑ. Андрей Трофимовича та элек таптанӑ, анчах ӑна ентешӗсем юратман тени тӗрӗс мар. Тӑван ял халӑхӗнчен Петтоки усал сӑмах илтсе курман.

Ахманяра Петуховсем йышлӑ пурӑнаççӗ. Андрей шӑлнӗн Василий Трофимовичӑн ывӑлӗ – Валерий Васильевич Петухов 2003 çулта çӗре кӗчӗ. Геннадий Васильевич та ватӑ ӗнтӗ. Хисеплӗ çынсем, ача-пӑчаллӑ, тӑхӑмлӑ-мӑнуклӑ. Тепӗр тымартан та – Петуховсен усрав хӗрӗнчен те – йыш аванах кайнӑ. Кунта Андрей Петтоки ӑсталӑхне тӑсаканӗ пур – район хаçатӗнче ĕçлекен Александр Шариков журналист. Вӑл та куккӑшӗн пурнӑçӗпе, пултарулӑхӗпе кӑсӑкланать. Темиçе çӗнӗ материал пичетлесе кӑларчӗ. Ахманясем Андрей Петтокин Самарти тӑванӗсене асрах тытаççӗ, килсе курма йыхравлаççӗ. Петтокисем кирек хӑçан та кӗтнӗ тӑвансем пулӗç. «Майра инке» килме пӑрахрӗ, теççӗ Ахманя çыннисем. – Ахӑртнех, Галина Андреевна ватӑлчӗ пуль, теççӗ. Чӑнах та ватӑ ӗнтӗ вӑл. Инçе çула тухаймӗ, анчах ун асӗнчен тӑван Ахманя та, чунри Онтри те самант та тухса çухалман. Ашшӗн тӑван ялнеçӗрне хӗрӗ – Людмила Андреевна та чунра упрать. Людмила Петтокипе 2001 çулхи раштавӑн 7-мӗшӗнче

Самарта Влас Паймена асӑнса хӑма уҫнӑ чухне вӑрах каласрӑмӑр, ӑна пӗтӗм ялпа чунтан кӗтнине каларӑм. 2002 ҫулта вӑл аншӗ ялӗнче хӑналанчӗ, Шупашкарта пулса курчӗ. Ун хыҫҫӑн Самарсем А.Н.Толстой музей-усадьбинче иртгернӗ Петтоки каҫӗнче Чӑваш ҫӗршывӗ ҫинчен ӑшпиллӗн каласа хавхаланчӗ.

Поэт чунтан-вартан юратнӑ Самар хулинче – Исаев Мӗтрипе, Влас Пайменпа, Илле Тукташпа, Стихван Шавлипе, Николай Евдокимовпа тата ытти улӑп-чӑвашсемпе пӗрле ҫамрӑклӑхне иртгернӗ хулара – унӑн ятне упракан кӗтес пур. Самартан салтака кайса, 36 ҫулхи хӑюллӑ рота командирӗ 1942 ҫулхи ака уйӑхӗн 18-мӗшӗнче ҫамрӑк пуҫне паттӑррӑн хунӑ. Сӑваҫ вилтӑприйӗ – аякри Смоленск облаҫӗнче, Витебск хули ҫумӗнчи Велиж районӗнче, Селище ялӗн масарӗнче. Ҫурхи ӑшӑ кунсем ҫитсен унта саркайӑксем юрлаҫҫӗ, ешӗл ҫулҫӑ ҫепӗҫҫӗн пӑшӑлтататать. Вилтӑприне шкул ачисем тирпейлесе тӑраҫҫӗ. Унта Чӑваш Республикинчен те ҫамрӑк йӗрлевҫӗсем пӗрре кӑна мар ҫитсе курчӗҫ.

## Сăмах ани çинче

Илемлĕ сăмах хирне Андрей Петтоки шкулта вĕреннĕ чухнех тухнă. Тăван ялта та, Каршлăхпа Мăн Сĕнтĕрте те вăл ачасем кăларакан журналсене хутшăннă. Журналĕсем «Шуçăм», «Пробуждение» ятлă пулнă. XX ĕмĕр пуçламăшĕнчи аслă пăлхавăрсем чăваш сăмахлăхне çĕкленӳ кӳнĕ. Автан Онтрийĕ çав юхăма пит аван туйса илнĕ, алă вĕççĕн хаçатсемпе журналсем кăларнă. «Шуçăм» тĕременĕ (редакторĕ) пулса, унта самаях аван сăвăсем «пичетлеме» пуçланă. Ку журнала С.В.Элкер асăрханă. Çавăнпах пулĕ Автан Онтрин сăввисем кĕçех Шупашкарта пичетленме тытăннă. 20-мĕш çулсен варринче «Сунтал», «Капкăн» журналсенче, «Канаш» («Чăваш коммуни») хаçатра тухнă. 30-мĕш çулсенчче вара сăввисемпе калавĕсем, статйисем «Трактор» журнала, «Красная Чувашия», «Колхозник ялавĕ», «Çамрăк колхозник», «Коммунар» тата ытти хаçатсене кĕме пуçлаççĕ. Çырать, куçарать. Куçарусем уйрăм кĕнекен пичетленсе пыраççĕ, «Сунталра» тухаççĕ, «Çамрăк декламатор», «Чăваш илемлĕ литературин антологине», шкул вĕрентĕкĕсене лекеççĕ.

Андрей Петтоки çырнисем нумай мар, сахал та мар. Хăй пурăннă чухне вăл «Çирĕм иккĕ» (1932), «Сăвăсемпе поэмăсем» (1936), 1937 çулта К.В.Ивановăн вырăсла куçарнă «Нарспине» Мускавра пысăк тиражпа (10 пин) кăларма пултарнă. 1964 çулта О.И.Отачкинăпа М.И.Петрова (Кĕнеке палати) пухнипе, Ю.И.Скворцов çыравçă тӳрлетнипе «Сăвăсемпе поэмăсем» кĕнеки (лайăх кĕнеке!) тухнă. Сахал та çитет, нумай та пĕтет. Тăван поэзи хирĕнче Андрей Петтокин – хăйĕн анлă ани, хăйĕн юратнă хирĕ. Сăввисем тулли кĕвĕллĕ, сулмаклă та уçăмлă. Вăл вăхăтра вĕсем тата çĕнĕрех курăннă. Халĕ ĕнтĕ вăхăт тем тĕрлĕ улшăнчĕ, саманасем саккăрла çапса иртрĕç. Апла-тăк та çав поэзи техĕмĕ иксĕлмест.

Мускаври киноӳнерсен институчĕн сценари факультетĕнче вĕреннĕ чухне Андрей Петтоки К.Ивановăн «Нарспи» поэмине вырăсла куçарса хурать. Ку вăл – пысăк

çитĕнӳ. Петтоки куçарăвне тиркекенсем те, поэмăна ытлашши ирĕклĕ майпа куçарнă тесе мăкăртатакансем те пулчĕç. Анчах çакна асра тытас пулать: «Нарспи» поэмăна Петтокирен малтан нимĕнле урăх чĕлхене те куçараман пулман. Петтоки çак пархатарлă ĕçе никамран малтан хăй тĕллĕн тытăнса куçарнă, – тенĕ Леонид Агаков (Тăван Атăл, 1965, № 5, 93–94 енсем). Тĕрĕсех каланă.

Паллах, тин çеç аслă пĕлӳ илме тытăннă ял ачишĕн куçару ĕçĕнче пин тĕрлĕ чăрмав сиксе тухнă. Ахальтен-им вăл «ирĕклĕ» куçарнă. Çавна ăнланнипех пулĕ Влас Паймен та Петтокие майлă çырнă: «Любовно собранные автором поэмы богатейшие сокровища переданы переводчиком А.Петтоки в своеобразной форме. Петтоки пренебрег рифмой в интересах полноты художественной передачи. Он избрал форму, типичную для устного творчества многих народов. Перевод его имеет ряд достоинств, до сих пор еще не перекрытых никем из последующих переводчиков классика чувашской литературы», – тенĕ вăл, хăй те «Нарспие» вырăсла куçарса кĕнеке кăларнă поэт. *(«Всегда в строю» пухчă, Куйбышев, 1964; Влас Паймен умсăмахĕ).*

А.Петтоки куçарнă «Нарспи» йывăрпа пичетленет. Мускав çумĕнчи Малеевкăри пултарулăх çуртĕнчен куçаруçă А.И.Золотов тата Д.Д.Данилов патне çапла çырнă.

«Кто-то представил подстрочник и Гослитиздат заключил договор с редактором национального сектора Шенгели на перевод поэмы «Нарспи». По вопросу моего перевода мне приходилось иметь дело с этим самым Шенгели, он прочитал мой перевод, одобрил, нашел, что перевод сделал удовлетворительно для напечатания, но все же его пока не приняли. Я боюсь того, что меня тут вежливенько отваживают, ибо Шенгели уже успел получить по договору аванс... Сейчас мою рукопись направили к главному редактору издательства, от решения которого зависит моя, вернее, судьба моего перевода. После восьмого уже буду знать, что делать. Если прогорит дело с «Нарспи», за время нахождения здесь займусь чем-нибудь другим, вероятно, романом».

«Дорогой Аркадий Иванович! Письмо твое меня очень обрадовало и дало большой заряд к работе. А то я к последнему времени столько изнервничался, что работал с большим напряжением, которое подчас самому казалось не под силу. И все эта «прекрасная дама сердца Нарспи» виновата. Первая половина апреля у меня прошла совершенно беспродуктивно, и я был в самом что ни есть неуверенном и шатком положении... Так как вопрос стоял о целесообразности моей дальнейшей работы по переводу, мне необходимо было как можно скорее узнать окончательное решение об издании моего перевода. И вот мне чуть ли не 7 раз пришлось выезжать в Москву и каждый раз безуспешно, все половинчатое обещание. Один Бог, да бедный мой добровольный болельщик Агаков знают все мои переживания и мучения. И лишь в последний раз, перед майскими праздниками, почти кое-как, окончательно оформил подписание договора и я причем пошел на последнее: договор самый что ни на есть «кабальный» – перевод с последующей литературной обработкой и поэтому мои материальные интересы совершенно урезаны, за строку всего один рубль. И это все за все мои муки в гослитиздатовских похождениях. Но я уже не стал входить с этой Рябининой в дополнительные переговоры на этот счет и, махнув рукой, согласился на все, лишь бы работа была принята на любых условиях...»

29 сентября 1936 г.

«Сегодня имел встречу с редактором моего перевода «Нарспи» – В.В.Казиным. Работа по редактированию им уже закончена, и он, после следующей встречи, которая состоится 11 октября сего года, не позже 15-го сдает редактору перевода в Гослитиздат. В общих словах перевод его удовлетворил вполне, редактирование проведено им добросовестно, и все пока идет прекрасно. Кроме того, я здесь связался с тов. Ванюшевым, зав. производственным сектором Гослитиздата (он чуваш), и он значительно поможет в деле форсирования выпуска поэмы в свет.

Он, к слову сказать, уже имел разговор с Беспаловым относительно долгой возни с изданием «Нарспи», тот обещался продвинуть дело как можно скорее. Ванюшев также гарантирует качественную сторону издания (бумага, переплет и т.д.). В общем, есть надежда на то, что «Нарспи» выйдет еще в этом, 1936 году, или в январе 1937 г.»

А.Петтоки чӑвашла-вырӑсла тата вырӑсла-чӑвашла кусару шкулӗ витӗр ҫамрӑклах чыслӑн тухма пултарнӑ. Ку вӑл унӑн пултару хевти пысӑккине, чи маттур чӑваш ӑстисен ретӗнче тӑнине систернӗ.

А.Петтоки – П.Хусанкайпа В.Митта ҳушшинчи талант. Ку – тавлашмасӑрах курӑнакан чӑнлӑх. Ӗмӗрӗ сарӑмсӑр татӑлнӑран кӑна вӗсене тан лартса хак пама пултараймастпӑр.

Вӗри чунлӑ Андрей Петтоки ял-хула тӑрӑх ывӑнмасӑр ҫӳренӗ. Вӑхӑт малта пыракансем пирки ҫырма ыйтнӑ. Петтоки ҫырнӑ. Калав та, тӗрленчӗк те хайланӑ. Тӗрленчӗкӗсен ячӗсемех тематикине уҫса параҫҫӗ: «Чечекленет ҫӗнелнӗ ял» (1935), «Алексей Моисеев: «Хӗрлӗ Сурӑм» председателӗ» (1935), «Халь вӗсем авӑн ҫапаҫҫӗ» (1934), «Культкомбайн акара», «Хӗвел ансан» (1933)...

Тӗрленчӗксенче – колхоз тунӑ вӑхӑт. Тӑван тавра пирки ҫырнӑ «Ферма» очерка юриех вуласа пӑхӑр-ха... Паян вӑл мӗн шухӑшлаттарӗ-ши Ахманя таврашӗсене?

«Халь ак виҫ ялти колхозниксем, пӗр ҫӗр аллӑ ҫын ытла, пӗринпе пӗри хутшӑнса кайса, ретӗн-ретӗн утаҫҫӗ плугсем хыҫҫӑн вӑрманти сарлака уҫланкӑ ҫийӗн. Виҫӗ ялти колхоз ҫыннисем хавасланса ӗҫлеҫҫӗ. Хӗпӗртемелле вӗт! Ӗлӗк пулсан хамӑр ялти ҫынпа та пӗрле, пӗр касӑпа хыҫа-хыҫӑн тӑрса сухаламанччӗҫ-ха. Иртенпе каҫчен пӗр ҫӗтӗк-ҫатӑк ани ҫийӗнче пӗчченех... Халӗ – пӗр ял мар, виҫ ял ҫыннисем пӗрле!

1930 ҫулта пур Ахмене ялӗҫтовкомӗпе пӗр колхоз пулнӑччӗ. Асӑнмалӑх ҫул! «Ленинҫул» колхоз! Малтанах питӗ йывӑр ферма ӗҫченӗсене, унта ӗҫлеме каясшӑн мар...

Пӗччен пур ҫӗре ӗлкӗрет Петров арӑмӗ – Авдотья Ефремовна. Ялта ӑна пурте Петров арӑмӗ теҫҫӗ. Ӗнисене

сумалла, пăрушĕсене пăхмалла, хăйĕн икĕ ачине апат пĕçерсе çитермелле. Пур ĕçре ĕлкĕрет Петров арăмĕ. Колхоза вăл хăй ирĕкĕпе кĕнĕ. Хăйĕн ирĕкĕпех ликпункта çӳресе пĕртак çырма, вулама вĕреннĕ. Пĕр пухуран та юлмасть. Иртнĕ пурнăçа шеллемест Петров арăмĕ, унăн пурнăçĕ – умра, колхозра» (Сунтал, 1931, 9, 9-мĕш ен).

А.Петтоки йĕркеленĕ «Ленинçул» колхоз тахçанах темиçе хут улшăннă. Çыннисем те урăх. Халĕ Петров арăмĕн мăнукĕсен вăхăчĕ. Колхозран вĕсем каллех инхоза тухса пăхрĕç. 80–90-мĕш çулсенче Раççей «пасар саманине» ăмсанчĕ. XXI ĕмĕрте тин хăш çулĕ тĕрĕссине ăнкарса илĕпĕр. Маншăн пулсан, Андрей Петтокисем халăх пĕрлĕхĕшĕн, ирĕкшĕн мала чĕнни паян та кивелмен. Харкамлăхра чăвашăн малаш çук! Пирĕн ĕмĕрсенчи истори пĕрлĕхпе чăмăртанса упранасси çинчен калать. Кашни уйрăм питĕрĕнсе пурăнма чăваш çĕрме пуянсен картине лекеймен-ха. Çавă шухăшлаттарать те Петтоки очеркне вуласан.

Писательсен правленине ертсе пынă çыравçă литература ыйтăвĕсемпе статьясем çырмасăр пултарайман.

Мĕне тăрать 1931 çулхи статйин ячĕ! «Илемлĕ литературăна масса хушшине сарас ĕçре прорыв!» Ыттисем те çавах: «Историлле решени хыççăн» (1932), «ЧПП Ассоциацийĕн ӳсĕм çулĕ-йĕрĕсем» (1932), «Пятнадцать лет чувашского гостеатра и чувашская драматургия» (1933). Паллах, ку статьясем пурте парти кăтартăвĕсем çинче никĕсленсе юлнă. «Пултарулăх перестройкин Пленумĕ» (1933)... Ним мар 1988 çулхи перестройка чĕнĕвĕ пек илтĕнет.

А.Т.Петтоки пултарулăхĕ нумай енлĕ. Вăл 1926 çултах Кĕркури Майоровăн сăввисене тишкерсе «Сунтал» журналта статья пичетленĕ. 1937 çулта Анри Барбюс пирки каласа панă...

1935 çулта çул тĕрленчĕкĕсен ярăмне пичетленĕ: «Бригада чувашских писателей в Казахстане», «В стране степей и снежных гор»...

«Писателĕн «çуралнăран пулнă» талант çумне кирлĕ таран культурăлăх çитмесен вăл пысăк, талантлă произве-

денисем çырма пултараймасть» (*Историлле решени хыççăн. – Сунтал, 1932, 10, 4-мĕш ен).*

Е тата «Тĕп пултарулăх ыйтăвĕ – ытти тĕрлĕ ыйтусенчен ытларах вăл социализмла реализм ыйтăвĕ пулса тăрать. Пленум хăйĕн ĕçĕсенче социализмла реализм методĕ çинчен ыйтăва çителĕклĕ тата анлăн та тарăнăн лартрĕ» *(Сунтал, 1933, 10, 26 ен).*

Ку – çав вăхăт сăмахĕ. Андрей Петтоки – самана ывăлĕ. Анчах вăл ÿнерсен пархатарлă ĕçне темле меслетсемшĕн кирлĕ тесе шутламан. Халăх ĕçĕ – ÿнерçĕсен тивĕçĕ. Çакна ăнланса илни паянхи литературăри çулйĕре тĕрĕс уяма, чăн-чăн пултарулăх пурнăçпа тачă çыхăнса, пĕтĕм этемлĕх шухăшлавĕпе тан пырсан кăна ĕмĕрлĕх писĕ хайлавсем пама пултарнине систерĕ.

## Ӗмӗтпе пӗлӗте ҫӗкленсе

Кирек хӑш ҫамрӑк сӑвӑҫ пекех, Андрей Петтоки те малтанхи сӑввисенче тӑван кӗтесе, яла, ҫутҫанталӑка, улӑхҫарана, тырпуллӑ уй-хире, шуҫӑмпа шӑпчӑка, юратӑва хапӑлланӑ..

1927–30 ҫулсенче ҫырнӑ сӑввисем: «Кӗмӗл тополь», «Юрӑ», «Уй-хир хӗрне», «Пит те лайӑх-ҫке», «Хӗр патне», «Ҫичӗ ҫӑлтӑр» тата ыттисем чӑваш лирикине кивелми пуянлатса тӑраҫҫӗ.

Яштак тополь хыҫри картара,
Яштак тополь ларать ҫулҫӑра...
Ҫулҫи витӗр уйӑх ирӗлет,
Ҫулҫӑ витӗр ҫӗре тӗрӗлет... –

мана ку йӗркесем Илле Тукташӑн, Иван Ивникӗн, Нестер Янкасӑн тата ытти маттур лириксен паха сӑввисем пекех туйӑнаҫҫӗ. Е тата ҫеҫпӗлле вӗрилӗх курӑнса каять:

Ҫиҫ, ҫиҫӗм, ҫивӗччӗн, ҫирӗп,
Сир штрумӑн сӗм хура карне!
Эп сан пекех – пӗлӗте йӑлт сирӗп,
Санпа, тӑван чӗлхем! (Ҫиҫӗм, 1928).

Петтокин эпосла ансатлӑхӗ килӗшет. Йӗркипе лӑпкӑн каласа кайнӑ пек унӑн «ӗҫ сӑввисем», анчах вӗсенче чунхаваллӑх тапса тӑрать:

Ак ҫитрӗмӗр ана ҫине.
Аттен алра сар кунтӑ.
Сапать тырра вӑл ик енне:
Тырри кӗрнеклӗ пултӑр!
Ун хыҫҫӑнах тӑвап сӳре –
Йӑлт вантӑр муклашкийӗ!
Нӳрелнӗ ҫӗр пит кӑпӑшка,
Нӳрелнӗ ҫӗр пит мӑнтӑр...
Кӗсре те ывӑннӑ – хашкать:
Сисмен те – ҫитнӗ кӑнтӑр.

1927 ҫулта ҫырнӑ сӑвӑ – «Хӗр патне». Унта мана XX ӗмӗр вӗҫӗнче савса юрлакан «Только две зимы, только две весны»... юрӑ сасси илтӗнет:

Нумай мар – ик çул çеç, ик çĕрте
Курнăçмасăр иртет пĕр-пĕрне.
Вăхăт шухă, вĕçет хăвăртах,
Сисĕн-и, таврăнатăп вăртах...

Çирĕмри çутă кăмăл, яшлăхри чĕрĕ вăй тапса тăрать Каршлăх çулĕ çинче çырнă «Çурхи çил» сăвăра. «Ĕмĕт çур вăйĕпе чĕрĕлет, ĕмĕт сарăлать тĕнчипе»... – савăнать «пуçне çурхи çилпе çăвакан, симĕс калчана ура тупанне явса утакан» каччă.

Выçăллă-тутăллă пурăннă, çăпатапа, сухапуçпе çӳренĕ сынсен телейĕ хальхинчен темчуль сахалрах пулнă, вĕсем паянхи ырлăха курман, çăмăл машинăсемпе вĕçеймен, кăнтăрти Анталья̆ра савăшайман тесе шутлаттăм. Çук, эпир Петтокисен вăхăтĕнчи чухлĕ ăраслăх курайрас çук. Эпир çутçанталăкран, хĕвелпе çăлтăрсенчен, хура тăпрапа çăлкуç шывĕсенчен уйрăлса кайнă. Телей вăл тĕнчепе чун тасалăхĕнче. Çавă XX ĕмĕр вĕçĕнче питех те сахалланса юлчĕ. «Хĕвелĕ вут-хĕмĕн çунать» пĕчĕк поэмăра чăваш хĕрĕ ашшĕ-амăшĕ каланине итлемесĕр хăй юратнă çынна тухать, рабфака вĕренме каять. Телейлĕ! Калăн, паянхи хĕрупраç пĕр-пĕр Калифорние çул çӳреме кайнă пек... Ман шутпа, рабфака каяканĕ Америкăна каяканран та телейлĕрех пулнă!

Çамрăк чухнех А.Т.Петтоки аслă А.С.Пушкин, М.Ю.Лермонтов, А.А.Блок, Генрих Гейне сăввисене куçарса аталаннă, Çеçпĕл сăввисене вуласа хăпартланнă. Вичкĕнĕн сиснĕ вăл çĕннине, хăйне пуянлатса çĕклентерекен вăйсене! Пултарулăхĕ çулсерен хăпарса та хăпарса пынă. Йывăрĕ, паллах, тем чухлех тупăннă. Вăл йывăрне мар, ыррине пуç тайнă. Пурнăçăн çутă енĕсене кăна курма пултарнă тейĕн.

Кунран кун улшăнать самана,
Илемленĕ кунçул яланах... –

кăна сăвăç Ленинградра çар хĕсметĕнче чухне çырнă. Сăвăра вăл тракторсемпе Ильич лампиcене мухтать. Чăвашра вăл япаласем пулман та! Пăрăнми паттăр, парăнми маттур! Тăван халăха хăйпе пĕрле малтан мала

туртса каясси килнĕ салтак-йĕкĕтĕн, часрах хитре те тулăх пурнăç туса парас килнĕ.

Ку, паллах, «пурăнмашкăн пурнăç лайăх, юрлама та пит аван» вăхăчĕ пулнă.

Çынсем çинчен кăна мар, хăй пирки те çырать А.Петтоки. Унăн сăвăçах пулас килет.

Эпĕ те, тен, чăваш, тăван çĕршĕн
Тăван сăвăç пулайăп чăнах...
(Кĕрхи шухăш, 1928).

Çав вăхăтри Виктор Рсая та, çав вăхăтри Илле Тукташа та пĕрре мар аса илĕн. Пĕр вăхăт, пĕр ÿсĕм, пĕр талпăну!

Юрлар хытăрах пĕрле,
Пĕр ĕмĕтлĕ пулса!
Тавай тĕпрен çăвар
Кивелнĕ ват çĕре!

Ахманя сăвăçи «хура пĕлĕт пек кивĕ тĕнчене» çивĕч сăмахпа çĕнесшĕн. «Тăван хам савнă çĕр – çывăх çĕр! Илем санра та пур-мĕн! – тĕлĕнет вăл.

Пĕлеп: начар эс, пит çара,
Анчах çавах саватăп,
Çарашăн мар ялан асра –
Пулас вăйна шанатăп!

Тата мĕнле çырма пултартăр колхоз председателĕ. Вăл çак хĕн-хурлă çĕре савас çук пулсан, мĕн тесе кунне-çĕрне пĕлмесĕр ĕçлетĕр. Пуян çын пулас тесе-и? Ĕçлемесĕр те пуйма пулать! Лайăххине шанса, ĕненсе тунă вăл халăх ĕçне. Тен, пулĕ те ал-хапăл юхăма кĕрсе кайса, янтă пуррине ăмсанса, «эпĕ мĕнрен кая вара?» тесе хиркеленсе асла тухасси. Анчах нумайлăха мар. Талант, пултарулăх, тасалăх юлать ĕмĕрсен асне.

Кашни вăхăтăн хăйĕн сасси. Паян вăл – капла, ун чухне çапла пулнă. Андрей Петтоки сăввисем – XX ĕмĕрĕн 20-30-мĕш çулĕсен сасси. Вăл вăхăтри чăваш çĕрĕнче

малта пынă ăста çын шухăшĕ. Пулнă-и-ха ун чухне Муркашпа Сĕнтĕр хушшинче ăслăраххисем, маттуррисем? Пулнă пулĕ, анчах историе Петтоки çырăнса юлнă.

1927–30 çулсенчи поэзире (ыттисен пултарулăхĕнче те) Петтоки ăсталăхĕ çав халлĕнех хаклă. Вăхăчĕпе пăхсан – вилĕмсĕр тĕслĕх. Урăхран ун пек çыракансем тупăнаймĕç. Çĕнĕ ĕмĕрсен пачах урăххисем пулĕç. Этем чунĕ те, хапăлĕ те улшăнмасăр юлмĕ.

Чăваш халăх историйĕ – Андрей Петтоки тантăшĕсем çырса хăварнă сăнарлă истори – çапла халлĕнех упранса юлĕ. Урăхла мар, темиçеллĕ мар.

1929 çулта пĕрлешӳллĕ хуçалăхсен юхăмĕ пуçланать. Петтоки халăха пĕрлешме чĕнет. Çеçпĕл хак парса хăварнă «хĕсĕк, ансăр ана çинчи» чăваша вăл ирĕке, çителĕклĕ пурнăçа туртасшăн. XX ĕмĕр вĕçĕнче патшалăх пĕрлешӳллĕ хуçалăхсене аркатрĕ, харкамлатрĕ, йӳнĕпе сутрĕ... Тĕрĕс пулчĕ-ши вăл? Хресченшĕн – тĕрĕс мар!

Андрей Петтоки йĕрĕпе Самар хули тăрăх çӳрерĕмĕр, Влас Пайменпа калаçма тӳр килнĕччĕ. Вăтам Атăл крайĕ кăларнă «Волжская новь», «Штурм» журналсенче комбайнсем чăваш этеммишĕн Андриян Николаев тĕнче уçлăхне вĕçсе кайнинчен те хаваслăрах пулнине куратпăм. Влас Пайменпа пĕрле ĕçлеймен Петтоки, анчах пĕр майлах шухăшланă: тăхăр пусăллă уй-хирте вĕçен кайăк пек утсем çӳрени ĕмĕрсен ĕмĕтне çывхартнă, чăваш хĕрĕпе каччине хура тарлă ĕçрен кăштах та пулин хăтарса, ирĕкпе телей чĕптĕмне парнеленĕ. Кунĕпе ĕçлеççĕ чăваш ачисем, каç-каç вĕренеççĕ.

> Ударлă пилĕкçуллăха тăваттăра тăвар!
> Вара тин тулĕç ĕмĕтсем, чапланĕ çĕн саман...
> Колхозниксем, колхозниксем! Халех коммун тума!
> («Ушкăн çулпа» сăвă, «Сунтал», 1932, 9, ен).

Мана çак чĕнӳре мĕн тума чĕнни мар (колхоз-и унта, инхоз-и), этемлĕх нушаран тухса ырă хапăлпа пурăнмалли çула шырани паха. Петтоки поэзи ырсемне пĕлнех! Тырпуллă уй-хирсем, чечеклĕ çарансем, ялсемпе

вăрмансем çине ăшă пайăрки яракан сар хĕвел. Лăпкă çил, савăк сас, чĕвĕл-чĕвĕл тĕнче!

Анлă хирпе йĕкĕт пырать – туллин сывласа, куççене вылятса, тĕнчене юратса... Тата мĕн кирлĕ этеме?

Ман ăшăмра иртенпелех
Шăпчăк пĕр вĕççĕр юрлать...
Юн чарăнмасть вĕреме,
Пурнăç чипер курăнать...

Çутçанталăкран хăвăрт уйрălса кайрăмăр. Лаша çинчен анса ăшă кабинăна кĕрсе ларсан пачах та урăх сисĕмпе пăхма пуçларăмăр çĕршывăмăра. Хăватлă туйрăмăр хамăра, ăслă та паттăр пулса кайрăмăр. Пĕрех çутçанталăк пиртен вăйлăрах. Эпир – çутă тĕнче кайăкĕсем кăна!

Атăл çумĕнчи тавралăхра ӳссе, йăлăма утта çӳресе, Каршлăхра шăхăрса савăнса, Андрей Петтоки пурнăçа сăвăçла юратнă:

Эй-ха кам-ха тата мана чарĕ,
Кам-ха чарĕ ялпа киленме?
Çĕн урамăн раскалĕ начар-и
Ĕмĕтпе пĕлĕте çĕкленме?

Ялăмăрсем паян та пĕлĕте çĕкленеймен-ха. Çĕкленме май пуррине кăтартакан керменсем кăна ĕмĕтсем тĕлсĕр маррине систереççĕ. Çапах та – Андрей Петтоки пысăк шанăçĕ, ырă кăмăлĕ, таса шухăшĕсем çĕкленӳллĕх туйăмне вăйлатаççĕ. Романтик вăл, паллах! Çĕнĕ пулăм, çĕнĕ ӳсĕм çынни вăл. Хăй тавринче япăх çын курас килмест Петтокин, вăл пурне те хăйпе тан малти рете тăратĕччĕ!

Çăмăллăх илме (пенси-и унта, тавар-тăвар-и) маларах тухакан пайтах-ха, кĕрешĕве малтан кĕрекен сахал. Пĕрле ĕçлеме те, пĕрле кĕрешме те ăспа хапăл кирлĕ. Арлан чунлă çын хăйшĕн тапаçланса пин савăнăç тупать. Халăх ырлăхĕ хăпарĕ-ши кашни хăйшĕн çеç тапаçланнипе? Таçти çĕрсенче çапла пуйнă теççĕ... Тен, апла та мар – кам пĕлес. Петтокишĕн пулсан, ырлăх вăл пĕрлешсе ĕçленин-

че, пĕрлешсе малалла пынинче, Республикăпа чăваш халăхĕ ыттисемпе тан çĕкленнинче.

Тертленсе тупнă çăкăра харампырсем туртса илнĕ («Чăтсаттăмăр», 1933), килнĕ те куланайшăн хырса кайнă. Мĕн улшăннă унтанпа? Самана саккăрла çаптарман пулсан, А.Т.Петтоки хăй шанса тăнине тӳрре кăларнă та пулĕччĕ.

Андрей Петтоки, ытти чăвашсен пултаруллă сăвăçисем пекех, вырăсла та çырнă. Сухапуçĕнчен хăпса аслă шкул сакки çине мĕнле ларнă, çавăн пекех тĕнче классикĕсен аркинчен çакланма тапăçланнă. Мĕн тери хăюлăх, ăнтăлу, шанăç! Фронра вырăсла çырнă сăввисем, очеркĕстатьисем шĕвĕр пуля пекех вичкĕн пулса тухнă. Вак халăх ачисем аслă вырăс чĕлхине кĕске вăхăтрах классиксен шайĕпе çавăрса илни чăваш чĕлхе ăсталăхне кăтартса тăрать. Мĕн ку? Ĕмĕртен пухăннă хăват-и е пусмăра пула ыттисен куçĕнчен пăхма вĕренни-и? Ахăртнех, несĕл тымарĕнчен юлнă хăват. Тарçă кăна ютсен ăс-хакăлне ăша илеймĕччĕ.

Андрей Петтоки 1937 çулхи чӳк уйăхĕнче, Самарти Ятсăркка (Безымянка) тавринчи дачăра пурăннă кунсенче, 33 сăвă çырса пăрахнă. «Голубые дали» ятлă ярăм вăл. Пĕр пăхсан, сăввисене чăвашларан илемлетсе куçарнă йĕркепĕрлĕхсем (подстрочниксем) темелле, мĕншĕн тесен вырăн-вырăн вырăсла çыпăççах кайман тĕлсем пур. Чăннипе пăхсан – вырăсла çырнă хăй тĕллĕн сăвăсем. Вĕсене вырăс тĕременĕн (редакторĕн) якатмалла та – пичете сĕнмелле. Ман шутпа – халĕ ĕнтĕ «Сенкер инçетсем» истори палăкĕ пекех – вĕсене тӳрлетмесĕрех кăларсан та аван. Пулччăр йăнăшлă, такăнчăк йĕркесемлĕ. Мĕн пулнă, çав юлтăр. Унта – чăваш сăвăçин чунĕ, пĕлĕвĕ, хăнăхăвĕ, пултарулăхĕпе ăсталăхĕ. Чун çуннă чухне çырнă сăвăсем. Юрату вучĕпе кăна çуннă-ши сăвăç чунĕ?

«Прошумел надо мной этот год как гроза по ржаной полосе», – тесе мĕне палăртса каланă-ши вăл пĕрремĕш сăвăрах («Не скажи мне, мой друг, ничего...»). Но вот знаю одно: иногда и железо сгорит, заржавев. Я – без чисел, без знаков, без дат – весь сгорел за один перегрев». Манмăпăр – ку вăл Вăтăр Çиччĕмĕш çул.

Унтанах: «Я ждал, я знал – она придет» – йӑлтах юрату юрри темелле. Есенин, Блок кӗввипе. Поэзин чи таса мӑскалӗпе виҫсен те селӗм, паха. Унтах: «Москва! Твой взгляд так властен!». Унтах: «Москвою властвовал декабрь... Вставал с Востока где-то день, снимая тьмы посты...»

Кӗвӗллӗ, килӗшӳллӗ лирика. Юрату сӑввисем. Савни ҫинчен-и, тӑван Ҫӗршыв ҫинчен-и – пӗрех! Юрату сӑввисем. Пӗрремӗш йӗркесемех калаҫҫӗ:

Твой образ неземной, нездешний...
Я много чувств себе сберег – возьми!

Те хӗр пирки, те шӑпа ҫинчен... Апла-капла шутлаттарать:

О, сколько тягостнейших дней,
Тоскливых впереди!
О, солнышко судьбы моей,
Приди! Приди! Приди!

Аркадий Лукин сӑвӑҫ 21-мӗш («Какой хороший был тот день») тата 25-мӗш («Одной тебе молюсь я тайно) сӑвӑсене чӑвашла куҫарса пичетлерӗ. 33 сӑвва пурне те куҫарма пулать. Лайӑх тӗшӗллӗ вӗсем. Ҫапах та – хӑй ҫырнӑ пекех кӑларас килет. Вӗсем Александр Блок сӑввисене аса илтереҫҫӗ, синкерлӗ кунсен юратуллӑ ыратӑвне систереҫҫӗ. «Ночь мрачных шорохов полна, под ветром ветлы гнутся» (32).

Кашни сӑвва эпӗ икӗ сӑнар урлӑ сӑнатӑп. Юратнӑ хӗр е Тӑван Ҫӗршыв тӑрать умра. Акӑ юлашки, 33-мӗш сӑвӑ. Мӗн унта, мӗн сӑлтав?

Холодной плотной пеленою
Ночь застилает мне глаза.
Непроницаемой стеною
Закрыты все пути назад.

Забыть все-все – мое стремленье,
Забыть весь мир, забыть ее...

Найти покой душе в забвенье
И сердце усмирить свою.

Мне мнится все, что чары тают –
Как на заре седой туман.
Что в сердце боли утихают
От нанесенных ею ран.

Не часто в ночи бредовые,
Во тьме кошмарной пустоты
Мне снятся дали голубые,
Мне снятся вешние мечты.

И эти дали голубые,
Как в сказке промелькнувших дней,
Тревожат вновь мечты былые,
Рождают вновь тоску по ней.

И вновь взгораюсь прежней страстью,
Забвенья дух испепелив...
Ловлю вновь призрачное счастье,
Миражем ставшее вдали...

Мана Андрей Петтокин эзошла йĕкĕр шухăшĕ килĕшет. Вăл юратса пăрахнă хĕр çинчен кăна çырнă темелле. Анчах «Голубые дали» ярăмра çĕршыв шăпи, этем шăпи курăнать. Унти вăрттăн сăнар Митта Ваçлейĕн «Тайăрĕнче» палăртнă шахвăртуллă ыратупа çунать. Маншăн вăл çавăнпа хаклă. Ку сăвăсенче Е.Эллиевăнни пек пытарăнчăклăх пур. Кунта – талант таппи, медитативлă лирика пуянлăхĕ.

## «Çирĕм иккĕн хăйсем»

Чăваш поэзийĕн паллă хайлавĕ – А.Т.Петтокин «Çирĕм иккĕ» поэми, Петĕр Хусанкайăн «Хури», «Çирĕм улттă» поэмисен тантăшĕ. «Трактор» альманахăн 1-мĕш кĕнекинче 1931 çулта «Çирĕм иккĕ» (Ятсăрсем) ятпа В.Краснов-Аслин «Тăвалла» романĕн, Мĕтри Юманăн «Колхоз новеллисем» ярăмĕн, Çеçпĕл еткерĕн сыпăкĕсемпе пĕрле пичетленнĕ.

Поэмăна 1928 çулта Ленинградра çырнă, 1930 çулта Ахманере якатнă. 1932 çулта уйрăм кĕнекен тухнă, каярахпа «Вунă çул» (1936), «Тăван çĕршывшăн» (1956), 1964 çулта «Сăвăсемпе поэмăсем» кĕнекесенче тата ытти альманахсенче пичетленнĕ.

Хавхалануллă вăр-вар Петтокие паттăрлăх романтики илĕртсе тăнă. Çар ретĕнче пулни ăна «Çирĕм иккĕ» хавхине парнеленĕ.

Поэма историйĕ хăй хĕсметре тăнă полк пурнăçĕпе çыхăннă. Çар историйĕн кĕнекинчен вуласа пĕлнĕ-и ăна вăл, е тахăшĕ каласа панă – поэзишĕн ку тĕп вырăнта мар. Поэзин хăйĕн чăнлăхĕ.

Поэмăн пуçĕпе вĕçĕ (прологпа эпилог) тата 7 сыпăк пур: «Украинă», «Революци вăй-хăвачĕ», «Çирĕм иккĕн», «Пирĕн пуç Буденнăй», «Çирĕм иккĕн ак каллех», «Шуррисем», «Çирĕм ик вилĕм». Пĕрремĕш хут пичетленнĕ чухне çапла ăнлантарса хăварнă: «Поэмăра Тури Кĕçнерни енчи (Тутаркас р.) сăмах çаврăнăçĕсем нумай. Ăна авторĕ юри çавăн пек çырнă. Çаплипех хăварса пичетлетпĕр», – тенĕ. Хăшпĕр сăмахсене ăнлантарса хăварнă: чаршийĕ – чаршавĕ, ан çур – ан сывăр, улă – ывăлу, тушнан – хурлăхлă та паттăрăн, çўксем – çĕвĕксем, чĕрсе пĕтернисем, сер – эсĕр...

Андрей Петтоки çар историйĕн пĕр ўкерчĕкне кăтартса, элтешлĕх вăрçин ятсăр паттăрĕсене мухтать, вĕсен вилĕм витĕр килнĕ вилĕмсĕрлĕхне чапа кăларать. Ку çĕнĕ пулăм мар – ун пекки А.Блокăн «Вуниккĕ», А.Серафимовичăн «Тимĕр юхăм» поэмипе романĕ те пур. Тăван

Çĕршыв аслă вăрçинче Петтокинни пек паттăрлăх хавхи çĕнĕрен çĕкленсе каять – Ухсай Яккăвĕн, Уйăп Мишшин, Петĕр Хусанкайăн – нумайĕшĕн поэзине кĕрет.

Поэмăри ĕçсен йĕрки ансат: çирĕм икĕ хĕрлĕ салтак тăшмана хăвăртрах аркатма çул уçас тесе, шуррисен тылне тухса каять. Кусем – коммунистсем, хăйсен ирĕкĕпе халăхшăн пуç хума килĕшнисем. Вĕсем çапăçура вилеççĕ. Паттăрлăхĕ паллă, ячĕсем – çук.

> Пĕлмеççĕ – мĕн ятлă-ши.
> Ăсти сын.
> Мĕн тăван-ха ятпа.
> Пĕр ят пур:
> Кашниййĕн пĕр ят - большевик...

Пăшалĕсене çирĕп чăмăртаççĕ. Тумĕ – кивĕ, аттисем шăтăк, алсишĕсем çук, хырăмĕсем выçă. Вĕсене танмарлăх, выçлăх, мăшкăл пĕр чăмăра пуçтарнă. Вĕсен çăлăнăçĕ – вилĕме хирĕç тухнинче. Хăйсемшĕн те мар, тăвансемшĕн, ача-пăчашăн, тăван çĕршывшăн танмар çапăçăва кĕреççĕ, паттăрлăх кăтартаççĕ, тăшман аллине çакланаççĕ. Хăрушă хĕстерӳ те, хăратни те витермест вĕсене. Пĕр çын пек çирĕп тăраççĕ, парăнмаççĕ, каламаççĕ. Урса кайнă тăшман вĕсене персе вĕлерме илсе тухать. Чĕркуçленмесĕр, паттăрлăха çухатмасăр, тĕрĕслĕх вăйлине туйса вилеççĕ хĕрлĕ салтаксем. Тĕрĕслĕх вăй парать этеме. Çакăн пек поэмăсем пăхса ӳстернĕ те ĕнтĕ Зоя Космодемьянскаясемпе Александр Матросовсене... Лайăх-и çакă е йăнăш? Чăваш ăнланăвĕпе – тĕрĕс. Тăван çĕртен, тăван халăхран хакли çĕр çинче урăх нимĕн те çук. Вĕсем çук пулсан чăваш та çук. Эппин, урăхла пурăнни те – йăлт харам!

Ахальтен-им Петтоки А.Блок поэминчи шухăшсемпе тава кĕрет? Харкамлăх мар, пĕрлĕх малта! Ку Çеçпĕл калаииех: кашни – пин-пин, вĕсем – пĕр çын!

> Пĕр ĕмĕтпе çунса,
> Вилчĕç пĕр ĕçшĕнех...

Александр Блокшăн пăлхавăр – тăвăл. Вăл, паллах, тĕнчене çӳп-çапран тасатма пултарать, Çĕнетмелĕх вăй

çук. Унăн вун икĕ хĕрлĕ салтакĕ кивĕ тĕнчене ишсе антарма каять. Вĕсем – суккăр аркатуçăсем. Умĕнче – чечек кăшăлĕ тăхăнтартнă Христос. Пăлхавăрта халăхпа хĕçпăшал вырăнне усă курасçĕ, теесшĕн Блок.

Петтоки хирĕçлет: «Пăлхавăр халăх ăнкарулăхĕпе вăйлă!»

Пролетари, итле!
Революци тăшман картинче.
Тыт алла хĕçпăшал, пролетари!
Саншăн çеç пулмалла пĕр тĕнче!

Вуниккĕн-и вĕсем, çирĕмиккĕн е çирĕмулттăн – поэмăра ятран тĕп герой çук. Тĕпре кунта – халăх, ĕмĕртен пусмăрта пурăннă, ирĕке юратакан, ĕçлеме пĕлекен халăх.

Кăвак хуппийĕ уçăлчĕ пĕрре –
Çĕр тўпийĕ пулмалла пире!

Кăвак хуппи – халапри сăнарлăх, пăлхавăрта тупăннă ирĕклĕх. Кирлине ыйтса юлаймарăн – нимсĕр тăрса юлтăн. Ирĕке сыхласа хăвараймарăн – каллех чуралăха кĕрсе ўкрĕн. Ку вăл ĕлĕк те çапла пулнă, малашне те çаплах пулать. Этем сухапуçпе е тракторпа, çилçунатпа е вертолетпа çўренипчен килмест вăл: чухăн çын та ирĕкпе телейлĕ, пуян çын та пăхăнчăк телейсĕр пулать.

«Ыр курасси – çыннинче!» тенĕ ытарайми Кĕçтентин Ивановăмăр. Яш пуçĕпех авалхи хапăла тăнкартнă вăл. Çамрăк Петтоки те анлă танлаштару кăтартма пултарнă: мĕскĕн халăхăн та питĕ пысăк тивлечĕ пур!

«Çирĕм иккĕ» поэмăна пичетленсенех ярса илнĕ. В.А.Долговăн поэмăн уйрăм кĕнекине хакласа çырнă ĕçĕ «Метод йăнăшĕ» ятлă. Çав вăхăтра ун стайине мухтанă та, ырланă та пулĕ, анчах...

«А.Петтоки граждан вăрçи çинчен пысăк япалах çырчĕ. Вăл «Çирĕм иккĕ» ятлă поэма пичетлесе кăларчĕ. Паллах ĕнтĕ, вăл унăн утăмĕ пулса тăрать, анчах вăл произведенире, унăн лайăх енĕсемпе пĕрлех, ытла та пысăк çитменлĕхсем пур. Вăл çитменлĕхсем автăра пысăк йăнăшсем патне илсе пырасçĕ» (Трактор, 1934, 8). «А.Петтокин

«Çирĕм иккĕ» поэмине вуланă чухне А.Блокăн «Вуниккĕ» ятлă поэми аса килет. Мĕншĕн тесен çак поэмăсене иккĕшне те символизм меслечĕпе çырнă. Символистсен тĕп хужожествăллă меслечĕ – символ, тĕп шухăшĕ – мистицизм. Çаксем урлă вĕсем пурнăçа кăтартса парасшăн. Вĕсен шухăшĕсем тĕнлĕ, тĕтреллĕ, тĕксĕм тухаççĕ. «Çирĕм иккĕри» шухăшсемпе çавăн пекрех тухнă. «Çирĕм иккĕри» геройсем те ытла та çинçе тухнă, вĕсем граждан вăрçи геройĕсем пек мар».

Кам мĕн шырать, çавна тупать. Тĕрĕс-и, тĕрĕс мари, вĕсене калама хушнă, калаççĕ. Шурă тĕсе тĕксĕм теççĕ, хĕрлĕ тĕсе хăмăр тăваççĕ. Петтокие ятласа, критик çапла калать: «Малалла автор хăйĕн символĕсемпе пĕтĕмпех мистика ăшне кĕрсе ӳкет. Вăл революци çинчен çырать:

Кăвак хуппийĕ уçăлчĕ пĕрре –
Çĕр тӳпийĕ пулмалла пире!

Турра ĕненекенсем каланă тăрăх, «кăвак хуппи» вăл турăран, аякри вăйсенчен килекен япала. Революцие «кăвак хуппи» уçăлни пек туса кăтартни пĕрре те тĕрĕс мар». Утне çитмен – туртине! теççĕ кун пек чухне чăвашсем! Малалла та çаплах: «Куççуль тăкать ват амăшĕ, кĕтет, кĕтет, çулран... Вĕççе каян хуракăшĕ калать: «Ан кĕт ăна». Тĕн сыннисем вĕрентнĕ тăрăх хуракăш «çветтуйла» кайăк, вăл инкек-синкек пулассине те каласа парать. «Çирĕм иккĕ» автăрĕ те хăйĕн кайăкне инкек пуласси çинчен калаттарать...» – малалла шĕкĕлчет критик. Поэзирен çич çухрăм аякри хаклав! Вăл çеç те мар! «Автор геройсем урлă мĕн кăтартас тени те паллă мар. Çирĕм иккĕшĕ те вĕсем большевиксен партинче тăни курăнать. Поэмăра урăх большевиксем çук. Паллах ĕнтĕ, 22 большевикăн руководствă парса тăмалла пулнă. Çав вăхăтрах çак большевиксем разведка пулса тăраççĕ (мĕншĕн разведкăна большевиксем кăна кайни паллă мар...) Реализм эстетикинчен пăхсан, конкретлă историллĕ принципа шута илсен – çирĕм иккĕшĕ те большевик пулни иккĕленмеллерех пулса тухать...»

Çак шайри критикăпа шухăшлав тĕнчинче Андрей Петтоки мана çерçисем хушшинчи пысăк хăлат пек курăнать, вара тăван сăвăçăмăрăн чысĕ тата çўлерех çĕкленет.

«Кунта тăван чĕлхе çинчен калама тивет. Автор сăмахсене калама çук хуçкаласа пĕтернĕ... Вулакансене уксах, куççăр, хăлхасăр, чĕлхесĕр сăмахсем кирлĕ мар, вĕсене чечекленсе тăракан, пурнăçран илнĕ литературăллă илемлĕ чĕлхе сăмахĕсем кирлĕ» (Трактор, 1934, 8, 144 ен).

Çак ухмахла тиркеве халăх та, поэт хăй те йышăнман. Вара 1937 çулхи чўкĕн 27-мĕшĕнче «Красная Чувашия» хаçатра «Сборник вражеских стихов» статья пичетлесе кăлараççĕ. Кунта В.Долгов А.Т.Петтокин «Вунă çул» (1936) кĕнекине тиркесе тăкнă. Статьяра тишкерў сĕмĕ те çук. Пĕтĕмпех – элек. Персе пăрахма çырнă приговор. «Поэма «Двадцать два» в нашей печати раскритикована давно. Но несмотря на это, Петтоки свое политически вредное произведение в этом сборнике выпустил третьим изданием. Эта поэма наполнена религиозно-мистическим, троцкистским содержанием». Çаксене вулатăп та, çўç вирелле тăрать. Эпĕ В.А.Долгова та, И.Д.Кузнецова та аван пĕлнĕ, калаçнă... Анчах вĕсен яшлăхри çав тери нĕрсĕр тунккуйлăхне ниепле те ăнкарма пултараймастăп. Ленин ячĕпе, малта пыракан парти ячĕпе вĕсем талантлă çынсене татса хыпса янă, вĕсемех вуншар çул кĕрекере реххетленсе ларнă... Тавах турра, халăхăмăр вĕсем пекех ухмах мар иккен-ха... Халăх В.Долгов критик пек шухăшламан. Урăхла каланă.

«Ахманери литкружокпа комсомол тата призывниксемпе колхозниксем А.Петтоки çырнă «Çирĕм иккĕ» поэмăна вуласа тухсан çапла йышăнчĕç: «Çирĕм иккĕ» поэмăна граждан вăрçинче чăн-чăн пулма пултарнă ĕçсем çинчен, Хĕрлĕ Çарăн ятсăр паттăрĕсем çинчен вăрçă историнчен илсе питĕ илемлĕ çырнă. Поэмăна вуланă хыççăн паллă кунсем, совет влаçĕшĕн çапăçса е тыткăнра асапланса вилнĕ юлташсем аса килеççĕ. Çак поэмăна вулани пур ĕç халăхне малашне пулас çапăçусенче хастарлăн çапăçма, вилнĕ юлташĕсемшĕн тавăрма хатĕрлентерет» (Сунтал, 1931, 10, 31 ен). Кăна В.Долговран чылай малтан, хушса хĕтĕртме-

сĕрех çырнă. Ентешĕсем сăвăçпа пĕрле савăнма пĕлнĕ, ыррине ырă, усала усал теме пултарнă. Ĕçтешĕсем вара пĕр чĕптĕм те намăс-симĕс туйман-ши? Мана çакă тепĕр çур ĕмĕртен те хытă тарăхтарать. Элле чăваш интеллигенцийĕн тăрпалтайсене тăн памалăх хăват пулман вара? Самани суккăр чухне куракканни шарламан-тăр, шарлакаиĕсем юхăм хыççăн пăтранса çўренĕ пулас. Халĕ те ун йышши тĕслĕх çĕклемĕпех. Кашни суйлав вăхăтĕнчех хывăх этемккесем яр-уççăн тапса тухаççĕ. Тата пит меллĕн ушкăнсене пайланаççĕ, сутăнаççĕ, павраççĕ...

«Руководство большевиков Красной Армии показано неправильно. Петтоки, вслед за буржуазным националистом Хузангаем, в этом произведении пропагандирует троцкистский тезис об отсутствии у трудящихся СССР социалистической родины... Поэма «Двадцать два» – троцкистское произведение, отсюда понятно, почему ее так рьяно защищали в свое время буржуазные националисты Д.Данилов и А.Золотов, отсюда понятно также и то, почему эта поэма и этот сборник вражеских стихов выпущен при содействии буржуазного националиста И.Сергеева, который по отношению к Петтоки оказался весьма щедрым, уплатив ему гонорар два раза». Çапла, урăх нимле те мар: ятне ыйтмасăрах пемелле те пăрахмалла çеç! Тăшман. Тата мĕнле хаяр тăшман!

Тискер майкăчран Андрей Петтоки мĕнле пăрăнса юлни хăй çак тăмсай критиксенчен ăслăрах пулнипе çеç çыхăнннă, вăл Мускавран Шупашкара таврăнман. Я.Ухсай Улатăра тухса тарнă, П.Хусанкай Вăтам Азире пытаннă, Андрей Петтоки Самарти Ятсăркка урамĕнче вырăсла сăвăсем çырнă.

«Тăшмана хамăртан мăшкăллама ирĕк парас мар!» тесе çырнă поэтăн тантăшĕ Роман Шашков 1937 çулта. Тăшманĕ алăк патне çитнĕ ĕнтĕ. Р.Шашков та, А.Петтоки те, ытти нумай-нумай тантăшĕ те кĕçех вăрçă хирĕнче пуçĕсене хунă. Пĕрисем юлташĕсене чĕререн чикнĕ, теприсем Тăван Çĕршывшăн пуçĕсене хунă, теприсем аптранă кăвакал пек лупашкара кутăн чăмнă. Çакăн пек саманара пурăннă пирĕн асаттесемпе аттесем. Çапла шăпа

виçнӗ чӑваш поэзине, чӑваш литературине, чӑваш пурнӑçне. Пӗрех те, тӗрӗслӗх пурах. Лайӑх вӑл – лайӑххах, талантли – талантлах. Ылтӑн тислӗкре ирӗлмест.

«Çирӗм иккӗ» поэмӑра – талпӑну, шухӑш, сӑнар.

Выçӑ, сивӗ... Шинель кивӗ.
Çӗтӗк-çатӑк сӑран атӑ.
Çӗлӗк çӗтӗк, пуçа хӗсӗк,
Çара алӑ кушӑркаллӑ...

Маншӑн çакӑ халпхаççӑн çырнӑ чылай сӑвӑсенчен вирлӗрех илтӗнет. Поэмӑн кашни сыпӑкӗ хайӗн кӗввипе янӑрать. Вирхӗнсе пыракан утлӑ çар çинчен çӑмӑл виçе каласа парать, «Вутлӑ çарӑн эпӗр, вут пек Хӗрлӗ Çар, çил пек хыт çӳретпӗр – Çил, пире ан чар!»

Хурлӑхлӑ кӗвӗпе вӗçленекен поэмӑн юлашки йӗркисем те хурлӑхлӑ:

Сахал-и выртаççӗ, шута ил,
Çирӗм иккӗ пек паттӑрсем.
Сахал-и ӳлет çеçен çил
Çав ятсӑр çынсемшӗн, шӑхӑрса.

Е тата çапӑçу самантне курӑпӑр: «Чӗтренчӗ пӗлӗт, кисренчӗ çӗр – тар нӳхрепи вутра. – Ах тур! Мӗн пулчӗ-ха кӗçӗр? кускаланаç штабра... – Тавай гранат часрах!.. – Н-на! На-ха!.. Сволочь офицер! Юлашкине! Трах!.. Трах!.. Н-на, хып! – Осечка, черт!»

Ун чухнехи чӑваш поэзийӗшӗн çакӑ – пысӑк çӗнӗлӗх. Кӗвӗсен вылявне А.Петтоки Маяковскилле, Çеçпӗлле аталантарма пултарнӑ.

«Çирӗм иккӗ» поэма сӑмахлӑха кӗрешӳ паттӑрлӑхне хӑюллӑн кӗртнӗ. Вӑл «Нарспи», «Янтрак янравӗ» поэмӑсенчен уйрӑлса, пачах урӑх темӑпа шухӑш, çӗнӗ илемлӗх курӑмӗ кӑларса тӑратнӑ.

Поэмӑн лайӑх енӗсем нумай. Ӑна 1928 çул шайӗпе пӑхас пулсан, ун чухнехи хайлавсенчен чылай ырӑ енӗпе уйрӑлса тӑрать. Чӑваш поэзинче çын шӑпине кӑтартасси яланах малта пулнӑ. Халӑха пӗрпӗтӗм сӑнарпа пӗтӗçтерме тытӑннин пуçламӑшӗ – «Çирӗм иккӗре». Паллах, вӑл

пӗтӗмлетӳ ун чухнехи пӑлхавӑр шухӑшлавӗнчен тухса пынӑ. Апла пулин те – элтешлӗх вӑрҫи вӑхӑтӗнчи «сӑран курткӑллӑ тимӗр ҫынсен» чӑваш поэзийӗнчи паха тӗслӗхӗ. Асра юлакан харкам сӑнара кӑтартма пултарни хаклӑ теҫҫӗ тепчевҫӗсем. Унчченхи чӑваш поэмисем харкам сӑнар тавра ҫаврӑнаҫҫӗ – Хӗветӗр, Нарспипе Сетнер, Варуҫипе Урине. Петтоки пач урӑх тӗллев лартать – харкам мар, пӗтӗм халӑха пӗр чӑмӑрта кӑтартать. Ушкӑнлӑ сӑнпит. А.Серафимовичӑн «Тимӗр юхӑмӗнчи» е А.Блокӑн «Вуниккӗри» пек. Уйрӑм паттӑра курма пӗлменни-ши вӑл, ҫитменлӗх-ши? Этем чунӗ патне ҫитме хал тупайманни-и? Ҫук, паллах! Паттӑрлӑх, ҫӗкленӳлӗх хавхин тӗслӗхӗ ҫапла пулмалла та. Ку вӑл лиро-эпикӑн расна тӗсӗ. Таса лирикӑпа пысӑк эпикӑн икӗ хӑвачӗ те пур унра. Анчах пайрӑм пӑхсан – иккӗшӗнчен те аякра тӑрать. Кунта пӗрлӗх, улӑпла пӗрлӗх! Пӗрпӗтӗм сӑнар, пӗр пурнӑҫ, пӗр вилӗм, пӗр чыс! Ҫакна В.Н.Абашев тӗпчевҫӗ те «Чувашская поэма» тӗпчев кӗнекинче (1964) чухласа илеймен. Такӑнать пек сӑвӑ йӗрки, сикчевлӗ пек поэма, анчах унӑн пӗтӗмӗшле пахалӑхӗ – вӑхӑт иртсен те – чакмасть. Пӗтӗмӗшле хавхи, тӗшши сывӑ. Сӑнарлӑхӗ асра юлать. Вӑрҫӑ паттӑрлӑхӗ пирки халӗ – темиҫе вӑрҫӑ витӗр тухсан – тем-тӗр чаплӑ хайлавсем пулмалла пек. Анчах ӳнерсен виҫи вӑхӑтран та, тӗслӗхсем нумайран та килмест. Пиҫӗ хайлав пин ҫул пурӑнать. «Ҫирӗм иккӗ» ӗмӗрӗ татах вӑрӑм.

Ҫирӗм икӗ салтак утать, чупать, такӑнать, кӗрхи сивӗ ҫилпе туллашать, пӗрех тӗллев патне туртӑнать. Ӗҫӗсене кура – сӑмахӗ, пурнӑҫне кура – сӑнарлӑхӗ. Пӗрре пуян та хӗвеллӗ Украина хирӗ куҫ умне тухать, тепре сас-чӳсӗр шӑплӑх каҫӗ хупӑрласа илет е шӑй-шай кӗрлевлӗ тытӑҫу пуҫланса каять... Хирпе вӗҫекен чӗрӗ ҫил тус-тӑвансем патне хыпар ҫитерӗ, чӗрисем тапма чарӑниччен тӑшманпа паттӑр ҫапӑҫни ҫинчен каласа пӗлтерӗ... Ӑшӑ ҫилпе чечексем ачашланаҫҫӗ. Этем те ҫавах. Этем пурӑнма ҫуралать. Ҫут тӗнчерен уйрӑлса кайма йывӑр. Ҫирӗм икӗ ятсӑр салтак вилме хӑрамасть. Вӗсемшӗн тӑвансен ирӗклӗхӗ пурнӑҫран хаклӑрах. Ҫавӑн пек коммунистсен философийӗ, кӗрешӳ философийӗ. Кирлӗ-и вӑл этемлӗхе? Кирлӗ

мар ун пек кĕрешӳ тейĕпĕр-и? Апла калани историе пăсни пулăччĕ. Уйрăм çынна кăна мар, пĕтĕм халăха чыс хаклă, ирĕк паха. Мĕншĕн чечченсем парăнма пĕлмесĕр кĕрешеççĕ, эппин?

Лапам çине, йĕрсе,
Вăш-вăш вĕрет лĕп çил,
Хĕвел пăхать хĕрсе,
Кăварлă пĕлĕт çи...

Çанталăк çирĕм икĕ салтакшăн хурланать. Вăштăр çил паттăрсен шăпи çинчен каласа тухнă ĕнтĕ... Анса ларакан хĕвел çутинче кăвак пĕлĕт хĕрри кăварланнă... Вăрçăра вилнисене асăнса кăварланать вăл...

Халăх сăмахлăхĕнчи, аваллăх халапĕсенчи пек ӳкерчĕксем тухаççĕ умма. Ĕмĕрлĕх ӳкерчĕксем. Çакăнта поэмăн хăвачĕ, Кивелменлĕхĕ. Сăмахĕсем ахальтен мар аваллăх енне туртаççĕ.

Андрей Петтоки яшлăхранпах вирьял чĕлхин хăйевĕрлĕхĕпе савăннă, унта авалхи паттăрлăх паллине курнă. Вирьялсене «çамçа сăмах килĕшмест» тенĕ вăл. Çыру чĕлхине муркашсен вырăнти сăмахĕсемпе пуянлатма хăраса тăман. С.В.Элкер ăна 1926 çултах литература чĕлхи мĕнле пулмалли çинчен ăнлантарса панă *(«Вирьял чĕлхи пирки» статья)*, анчах Петтоки тăван сăмахлăхра вирьялсен витĕмĕ сахал тесе шутланă, ăна сарас тесе çине тăнă. Çакă «Çирĕм иккĕ» поэмăра хытă сисĕнет. Унта вырăнти пуплев сахал мар. Уйрăмах пĕрремĕш кăларăмра. Кайранхисенче тӳрлетсе пынă. Ку ĕнтĕ литература чĕлхин виçисем çирĕпленсе пынинчен те килнĕ. Вырăнти тулли пĕлтерĕшлĕ сăмахсемпе кирек хăш çыравçă та усă куратех. Вĕсем Илпек Микулайĕн, Юрий Скворцовăн, Хĕветĕр Акиверăн тата ыттисен сахал мар. Вырăнлă та витĕмлĕ усă курнă сăмах вăрăм ĕмĕрлĕ. Чăрмавлă мар.

«Çирĕм иккĕ» поэма чăваш лиро-эпикинче «Арçури», «Нарспи», «Варуççи» поэмăсен ретĕнче тăрать. Паха та курăмлă вăл. Мĕншĕн? Вирхĕнӳлĕхĕпе, унччен янăраман шухăш-туйăмĕпе. Тăхăр сыпăклă виçерен тĕрлĕ янăрава куçма пултарни хăйех Çеçпĕл çулĕпе хăюллăн кайнине

кăтартса тăрать. Кĕске пуплевре пысăк ўкерчĕкпе шухăша уçса пама, чун-хавал хăватне кăтартма ăсталăх кирлĕ. Андрей Петтокин вăл пур.

«Çирĕм иккĕ» поэмăпа А.Т.Петтоки чăваш лиро-эпикин аслă хапхине хăюллăн уçнă. Ку вăл Петĕр Хусанкай «Хури» поэма хайланă вăхăтра пулса иртнĕ. Вĕсенчен маларах кам-кам ăстарах пулнине калама та йывăр.

«Çирĕм иккĕ» – чăваш поэзийĕн 20-мĕш çулсенчи çўллĕ пусăмĕ, пахалăхĕ, çĕнĕлĕхĕ. Ăна ун чухнех хапăлласа йышăннă, халĕ те такăнмасăр хавхаланса вулатпăр.

Ку героика – иртнĕ çулсенчи,
Вăл хаклăн туйăнать пире...
Историе кĕрĕ «ĕнерхи»,
Вăл кĕрĕ пулас ĕмĕре! –

çапла хак панă А.Петтоки хăй поэмăри ĕçсене. Тĕрĕс хак.

* * *

Андрей Петтоки лиро-эпикăн тĕрлĕ тĕсĕсене активсе пăхнă. Питлев поэми – «Вĕлтĕренпе хупах, талпиçен...», паттăрлăх поэми – «Октябрь», миниатюра-поэма – «Хĕвелĕ вут-хĕмĕн çунать» («Вунă çул», 1936), историпе биографи поэми – «Тарас Шевченко»... Пуçланă, палăртнă, ĕренкине тыттарнă, анчах якатса, вĕçлесе çитерейменскер хайлавсен шутĕнче – «Кузнецов мастерпа калаçни». Сăмах Атăла пĕвелесе электроэнерги тума пуçласси çинчен. Атăл çинчи Шупашкар ГЭСĕ тесен, XXI ĕмĕр чиккинчисем 80-мĕш çулсенче Çĕнĕ Шупашкар патĕнче лартнă гидроэлектростанцие аса илеççĕ. Чăваш Республики Атăла 30-мĕш çулсен пуçламăшĕнчех пĕвелеме тытăннă – виçнĕ, чавнă, никĕсленĕ. Шупашкарта çав çулсенче Атăлстрой çўрчĕсем шăкăрин ўссе ларнă. Мĕн калать-ха шыв пĕвисен ăсти Кузнецов маçтăр? Вăл паян Атăл тĕпне пăраласа тĕпчет.

– Кўрт-ха, ларт-ха Мăн Атăла савăл!
Тытса ил Аслă Атăл пĕвне,
Тимĕр-бетон пиççипе çыхса ил-ха!
... Кăвак кăпăг хумсен вăй-халне
Турбин витĕр ярса сăптăрайăпăр!

Аслă Атăл чарми тăвăлне
Генератор хĕвне пуçтарайăпăр!

Кузнецов маçтăр Вл. Маяковскилле калаçать. Пулин! Çакă вăл чăваш поэчĕ унпа тан шухăшлама та, хавхаланма та пултарнине кăтартать. Харăс-харăссăн утма пĕлӳпе ăсталăх кирлĕ. Вăл чăваш поэзинче пулни – çирĕп никĕс палли.

Атăл шывĕ халăха ырлăх кӳмелле, малашлăхшăн, этем телейĕшĕн ĕçлемелле. Этем çутçанталăк ачи, ăна çутçанталăк рехет курма туса янă. Эппин, хастарлăхпа, маттурлăхпа çавна тивĕçлĕ пулмалла. Эппин, алла хăнăхнă юханшыв, пысăк армана, электростанци урапине çавăрса пурлăх патăр!

Атăл пĕвисем пин-пин лаптăк çĕре шыв айне кайнишĕн паян пăшăрханатпăр пулсан та, этем Атăл хапхипе усă курни – ăс-хакăла, пултарулăха, халăх пĕрлĕхне кăтартакан аслă ĕç. Тĕнчене çутта кăларасси – этемлĕхĕн ĕмĕрхи ĕмĕчĕ. Вăл пурнăçланчĕ.

Ку вăл тĕлĕк мар,
Килес кунăн татăклă ĕçĕ!

Даниил Эльмен, Лука Спасов, Василий Токсин, Андрей Петтоки, Митта Ваçлейĕ тата ытти аслă сынсем Атăлпа çыхăннă ĕмĕчĕ пурнăçланчĕ. Атăл халăха электровăй парса тăшлать. Шывсене пĕли-пĕлми пĕвеленинче шыври чĕрлĕхшĕн сиен пур теççĕ. Анчах уншăн Çĕнетӳçĕсем айăплă мар. Сиенлĕхе ăс-хакăлпа çĕнтермелле!

Антив, Атăлăн Çĕнĕ Шупашкарти ГЭСĕ Андрей Петтоки ĕмĕчĕсен кĕретленнĕ палăкĕ пултăр! ГЭС кĕперĕ çине унăн поэмин йĕркисене кĕмĕлпе çырса çапма та юрать,

Вăй-хална сахал мар сапаларăн,
Çитĕ хăйăр çинче якалма!
Бетон-хурăç çинчен çӳле карăн –
Пĕлĕтре ялкăшса çуталма!

Шупашкарсем çине Атăл шевлипе пĕрле А.Петтоки ĕмĕчĕсен çутă сăвапĕ те çуттăн сапалантăр!

## Ӑрусен асӗнче

Халӑхри тата литературӑри ӗҫӗ-хӗлӗпе Андрей Петтоки ырӑ йӗр хӑварнӑ.

Тулли ҫулсем пурӑннӑ пулсан, вӑл халӑх ҫыравҫисен ретӗнче тӑрас ҫынччӗ. Пысӑк ӗмӗчӗсем халиччен те сӳнмеҫҫӗ. Тӗслӗхрен, 1940 ҫулта Леонид Агаковпа тӗл пулсан, К.В.Иванов ҫинчен роман ҫырма хатӗрленнине каласа панӑ. Ку ӗмӗте хӑҫан та пулсан пуруӑҫламаллах!

Тусӗпе тӗл пулнине Стихван Шавли аса илнӗ: «Унпа эпӗ виҫӗ хутчен курнӑҫнӑччӗ: икӗ хутчен – Самарта, виҫҫӗмӗшӗнче – Шупашкарта, Иванов юбилейӗнче. 1938 ҫулта Самарта тӗл пулнине ӗмӗрне те манас ҫук. Поэт тин кӑна ҫывӑхри дачӑран «Кӑвак инҫетсем» ятлӑ лирикӑлла сӑвӑ ярӑмне ҫырса килнӗччӗ. Хавасланса, хӗрсе вуласа пачӗ вӑл хӑйӗн сӑввисене. Ҫав сӑвӑсем тарӑн шухӑша яракан япаласемччӗ.

Ҫав каҫхине нумай калаҫрӑмӑр эпир унпа. Вӑл ҫырас, куҫарас ӗмӗчӗсемпе паллаштарчӗ. «Нарспие» иккӗмӗш хут куҫарса лайӑхлатасшӑнччӗ, граждан вӑрҫи ҫинчен поэма ҫырасшӑнччӗ – поэма планне туса та ҫитернӗччӗ» *(Ялав, 1952, 2).*

Тӑван Ҫӗршыв аслӑ вӑрҫинче, фронтра, А.Петтоки кун кӗнеки ҫырса пынӑ. Кӗскен, ирӗк панӑ чухлӗ. Вӑл вӑрҫӑ ҫинчен пысӑк поэма хывма хатӗрленсе тӑнӑ. Хутсем сухалнӑ. Вӑрҫӑ хирӗнче хут ҫеҫ-и пӗтнӗ? Ҫирӗм икӗ ятсӑр салтак кӑна-им пӗтнӗ хаяр вӑрҫӑра? «Лайӑх юлташчӗ, калаҫма та, хӑйне тытма та пӗлекен ҫынччӗ», – тесе пӗлтернӗ тӑванӗсене ҫапӑҫури юлташӗ – Патӑрьел чӑвашӗ Плечов политрук, кайран хӑй те вӑрҫӑ хирӗнче выртса юлнӑскер.

Паттӑр салтак, маттур сӑвӑҫ Андрей Трофимович Петтоки ҫинчен каланӑ сӑмахӑма Стихван Шавли ҫырнипе вӗҫлетӗп:

«Поэзири юлташӑмӑр, салтакӑмӑр!

Вилӗмӳпе эс вилӗме ҫӗнтертӗн. Юрласа пӗтермен юррусемшӗн ан хурлан, сан юрруна сан юлташусем малалла тӑсаҫҫӗ. Ятушӑн та ан иккӗлен: вӑл халӑхра пурӑнать, ӑна халӑх ырӑпа асӑнать».

*1975, 2001.*

Т у п м а л л и

Халал сӑмахӗ .......................................................... 3
Хушма хушамат вӑрттӑнлӑхӗ .............................................. 3
Тӑван Ҫӗршыв ытамӗ .................................................... 5
Сӑмах ани ҫинче ........................................................ 10
Ӗмӗтпе пӗлӗте ҫӗкленсе ................................................. 16
«Ҫирӗм иккӗн вӗсем...» ................................................. 24
Ӑрусен асӗнче .......................................................... 35

Виталий Петрович СТАНЬЯЛ

# ПОЭТ АНДРЕЙ ПЕТТОКИ

(Очерк жизни и творчества)

На чувашском языке

Серия «Классики чувашской словесности»

Редактор Э.В.Никитина
Верстка И.О.Михайловой
Оригинал-макет издательства «Новое время»

Подписано в печать 11.01.2005.
Формат 60х90/16. Гарнитура TimesNewRoman.
Бумага офсетная. Печать оперативная.
Физ. печ. л. 2,25. Тираж 150 экз. Заказ № 2.

Отпечатано в типографии издательства «Новое время».
428005. г.Чебоксары. ул.Ломоносова. д.2. Тел.: 60-00-22.



Андрей Петтоки

На врага!

Раскаты грозных бурь зовут нас в бой.
Пред нами – дни борьбы, побед и славы.
Не зная страха, с песней огневой
Пойдем мы на врага стальною лавой!

В сердцах у каждого клокочет гнев,
Вспененный болью за отчизну нашу,
За города, спаленные в огне,
За стоптанные шири нив и пашен.

В сердцах у каждого – святая месть,
Зовущая к расплате, к смертной каре,
И каждый грудью встал горой за честь,
За славу родины в сраженьях ярых.

Вперед, товарищи, – на поле грозных битв!
Победой реет боевое знамя!
Мы знаем твердо – будет враг разбит,
Мы знаем твердо – будущность за нами.

15/XII-41 г.

Лейтенант
Андрей Петтоки.